ХЫПАР

1999 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

12-13 (809-810) №№, 2015, апрель/ака, 2 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/мартăн 31-мĕшĕ тĕлне/

| ПАХЧА ÇИМĔÇ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 27-32 |
| Купăста | 35 |
| Сухан | 35-40 |
| Кишĕр | 35-40 |
| Ыхра | 140-150 |
| Хăяр | 90-160 |
| Хĕрлĕ кăшман | 35 |
| Помидор | 70-160 |
| Пылак пăрăç | 100-180 |
| Тăварланă хăяр | 100-120 |
| Йÿçĕтнĕ купăста | 100-120 |

| УЛМА-ÇЫРЛА | |
|---|---|
| Панулми | 50-120 |
| Исĕм çырли | 100-180 |
| Апельсин | 70-120 |
| Лимон | 70-120 |
| Банан | 75-90 |
| Шур çырли | 300 |
| Кĕтмел çырли | 200 |
| Хурма | 90-120 |
| Мандарин | 80-120 |
| Гранат | 80-120 |
| Сырлан | 180-200 |

| ÇĂНĂХ-КĔРПЕ | |
|---|---|
| Тулă çăнăхĕ | 29 |
| Вир кĕрпи | 32 |
| Хура тул -»- | 56-60 |
| Тулă -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 49-52 |
| Пăрçа | 30 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 47-50 |
| Пыл | 350-400 |

| АШ-КАКАЙ | |
|---|---|
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-350 |
| Сурăх ашĕ | 200-350 |
| Пĕвер | 150-180 |
| Пÿре | 70-80 |
| Чăх | 180-200 |
| Кролик | 350 |
| Салă | 150-200 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 50-68 |

| ПУЛĂ | |
|---|---|
| Шăнтнă скумбри | 180-200 |
| -»- сельдь | 160 |
| Мойва | 160 |
| Горбуша | 300 |
| Шăла пулă | 180-250 |
| Çупах | 100 |
| Карп | 180 |
| Çуйăн | 180-200 |
| Çăрттан | 150 |

| СĔТ-ТУРĂХ | |
|---|---|
| Сĕт /литр/ | 38 |
| Хăйма | 200 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 200-300 |
| Услам çу | 200 |



Автор сăнÿкерчĕкĕ.

## Чăх-чĕпе – тимлĕх, çемьене – татулăх

**«Кил-çурт, хушма хуçалăхăн» кăçалхи пĕрремĕш номерĕнче Кохинхин, Брама, Орпингтон ăратлă чăхсем çинчен çырса кăларсан пирĕн редакцие çак чăхсемпе кăсăкланса çырусем йышлăн килчĕç. Ăçта тупса илмеллине ыйтса çыракансем те пур. Пĕр адреса пĕлетĕп-ха, анчах вĕсем хăйсене валли çеç тытаççĕ. Чăх-чĕп фабрикисенче тĕрлĕ ăратлă чăхсем усрамаççĕ иккен. Тимлесех шырама тиврĕ тĕрлĕ чăх-чĕп тытакансене. Шыракан тупать теççĕ те – тупрăм...**

Ивановсем патне пĕрремĕш хут шăнкăравласанах автан авăтни çине-çинех илтĕннипе хĕпĕртерĕм. Хăйсемпе курнăçас кăмăл çирĕпленчĕ. Калаçса татăлнă кун Шупашкар районĕнчи Хăймалакасси ялĕнче пурăнакан Ивановсем патне çул тытрăм.

Çемье Хăймалакасси ялĕнче тĕпленни икĕ çул çеç-ха. Унччен вĕсем Йĕпреç районĕнче, унтан Шупашкар районĕнчи Чăрăшкассинче пурăннă. Пур çĕрте те хăйсем лайăх пĕлекен ĕçе – чăх-чĕп ĕрчетессине аталантарса пынă. Хутшăннă çынсене, пĕлĕшсене çак ĕçпе кăсăклантарма пикеннĕ, хăшĕсем хăйсем те халĕ килĕсенче интереслĕ ăратлă чăхсене тытаççĕ. Сăмаха кил хуçи хĕрарăмĕпе пуçларăм:

**– Екатерина Владимировна, сире чăх-чĕп ĕрчетессипе кам «чирлеттернĕ».**

– Манран пуçланнă темелле ĕнтĕ. Аттепе анне эпĕ пĕчĕк чухне Саратов облаçне куçса кайрĕç. Ĕçре хастар чăвашсем. Унта та тăрăшулăхпа палăрнă. Аннене çĕнĕ «Беларуç» трактор шанса парсан колхозри арçынсем ăмсанман мар.

Каярах, 90-мĕш çулсенче хуçалăхсем саланма пуçласан çемье фермер хуçалăхĕ йĕркелерĕ. Темиçе гектар çĕр, тĕрлĕ выльăх, чăх-чĕп тытатчĕç. Манăн вара яланах тăван Чăваш çĕрне таврăнас килетчĕ. Кукамай патне килсе пурăнаттăм. Çапла мана атте-анне Йĕпреç районĕнче çурт туянса пачĕç. Хам çап-çамрăк – 17-ре çеç. Саратов облаçĕнчи чăх-чĕп фабрикинчен чăх-чĕп кÿрсе килчĕç. Ахальлисене мар, тĕрлĕ ăратлисене. Кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçе вĕрентекен литература – пĕр çыхă. Вула, вĕрен, ĕçле. Çавăнтан пуçланчĕ те, – калаçать кăмăллă та вăр-вар кил хуçи хĕрарăмĕ Екатерина.

**– Хăймалакассинче икĕ çул пурнатпăр тетĕр. Кунта ăçтан килсе вырнаçрăр? Пĕлĕшсем пулăшрĕç-и?**

– Мăшăрпа Алексейпе пурнăç çулĕпе утма пуçланăранпа сакăр çул. Таçта та пурăнма тиврĕ çак хушăра. Мускавра та, Йĕпреçре упăшка килĕнче, çак районти Тарăнварти хамăн çуртра, Шупашкар районĕнчи Чăрăшкассинче кукамай килĕнче. Ялта кирек ăçта пурăнсан та чăх-чĕп тытассине пăрахман. Паллах ун чухне хамăра валли çеç пулнă. 8 çул каялла путене ĕрчетсе пăхас терĕмĕр. Вĕсен чĕпписене кăларма инкубатор кирлĕ: туянтăмăр. Путене ĕрчетсе сутма пуçларăмăр. «Килте те путене тытма пулать-и?» – тесе малтанлăха халăх тĕлĕнетчĕ. Путене пирки, унăн çăмартин сиплĕхĕ пирки мĕн чухлĕ каласа паман-ши çынсене? Вĕсен çăмарти сахăр диабечĕпе аптракансемшĕн, чĕре чирĕпе нушаланакансемшĕн питĕ усăллă. Вăл юнри холестерина виçере тытма пулăшать, юн çăралăхне йĕркелет, пĕчĕк ачасемшĕн юрăхлă диета апачĕ шутланать.

➡ 2 стр.

## Вулаканшăн ĕçлетпĕр

**Хаклă вулаканăмăрсем! Сире "Кил-çурт, хушма хуçалăх" хаçата çырăнса вуласа тăнăшăн, унпа çыхăну тытнăшăн тав тăватпăр!** Паллах, эпир хамăр енчен ăна интереслĕрех тата пуянрах тума, кил-çуртра усă курмашкăн кирлĕ сĕнÿсем пичетлеме тăрăшатпăр. Хаçат вулакан патне мĕнлерех çитнипе кăсăкланатпăр.

"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – "Хыпар" Издательство çурчĕн" пĕр кăларăмĕ. Вăл халиччен яланах 4 страницăпа тухса тăнă. Кăларăма ятарласа кил-тĕрĕшри ыйтусене хускатма хатĕрленĕ.

"Кил-çурт, хушма хуçалăх" вулакансемпе тачă çыхăну тытать. Нумай çыру килет редакцине. Тĕрлĕ ыйту-шухăш, пăшăрханусавăнăç вĕсенче. Эпир хамăр енчен çав ыйтусене тĕплĕн тишкерсе хаçат урлă тивĕçлĕ хурав пама тăрăшатпăр.

Юлашки вăхăтра "Хыпар" Издательство çуртĕнче" чылай çĕнĕлĕх пулчĕ. "Хыпар" хаçат урăх калăппа тухма пуçларĕ. Пирĕн хаçата та çырусем нумайрах килеççĕ. Ку, паллах, савăнтарать. Эппин хаçат çутатакан ыйтусем вулакана кирлĕ.

Малашне "Кил-çурт, хушма хуçалăх" хаçатра вулаканăмăрсене паллă пахча ăстисемпе, алĕç маçтăрĕсемпе, сумлă ветеринарсемпе, илемлĕ хуçалăхсемпе, хушма хуçалăха тытса пыракансемпе паллаштарма палăртатпăр. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕнчи опытпа килте усă курма май пулĕ. Унсăр пуçне тĕрлĕ канаш-сĕнÿ пичетлеме тăрăшăпăр. Çавна май пирĕн "Кил-çурт, хушма хуçалăх" тата пахарах, кирлĕрех пуласса шанатпăр. Малашне те юратнă кăларăмпа пĕрле юлма сĕнетпĕр.

**"Кил-çурт, хушма хуçалăх" редакторĕ Эльвира ИВАНОВА**

## Çапла калаççĕ

- Вăрман пек пуянни, уй пек асли çук.
- Юханшыв çул тупать теççĕ.
- Хĕвел çути пуриншĕн те пĕр пек çутатать.
- Кĕр тулăхĕ тулă çитерет.
- Выртан чул айне шыв юхмасть.
- Хуçи мĕнле – тарçи çапла.
- Тăван çĕршыв тăнăç пулсан, тăван йăву та пулĕ сан.

## Кун мĕнпе паллă

**Апрель, 1** – Кулăш, юптарупа суя кунĕ. Çак кун пĕр-пĕрне ухмаха хăвараççĕ, улталаса-юптарса ашкăнаççĕ. Кайăксен пĕтĕм тĕнчери кунĕ.

**Апрель, 2** – Раççейпе Беларуç пĕрлĕхĕн кунĕ. Пĕтĕм тĕнчери ачапча кĕнекисен кунĕ.

**Апрель, 3** – "Шыври" /Водопол/ кунĕ.

**Апрель, 5** – Геолог кунĕ. Кăçкă праçникĕ – Иисус Иерусалима кĕнĕ кун.

**Апрель, 6** – Следстви пайĕнче ĕçлекенĕн кунĕ.

**Апрель, 7** – Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунĕ.

**Апрель, 8** – Пĕтĕм тĕнчери цыгансен кунĕ.

## Вулакансем ыйтнипе

### Лайăх качака



**Зааненски породăллă качакасене пирĕн тăрăхра усраççĕ-и? Çак качакасем чăнах та майракасăрши, вĕсем тата мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?**

**Валентина ПЕТРОВА.**
Куславкка районĕ.

Зааненски ăратлă качакасен тĕп палли – шурă тĕслĕ тата пысăк кĕлеткеллĕ. Нумайăшĕ зааненски качакасем майракасăр теме хăнăхнă. Анчах ку тĕрĕсех мар. Качакасем майракаллă та пулаççĕ. Пăранланă путексенчен 40% çеç майракасăр. Ыттисене, майракаллă çуралакансене, ăратлăхпа ĕçлекен хуçалăхсенче пăранланă хыççăнах майрака мăкăльне ветеринари мелĕпе ĕнтсе /прижигани/ илеççĕ. Çакна качакасем тĕкĕшсе ан суранланччăр тесе тăваççĕ. Зааненски ăратлă качака тĕсĕ – шурă. Енчен те сире урăх тĕслĕ качакана зааненски ăратлă тесе сĕнеççĕ пулсан – куултав. Вĕсем урăх тĕслĕ пулмаççĕ. Çак качакасем çÿллĕ те пысăк. Çитĕнсе çитнĕ качака çÿллĕшĕ 70 см, ама качака виçи 60-70 кг, качака таки – 100 кг яхăн таять. Качакасем сухаллă та, сухалсăр та пулаççĕ – ку ăратлăх палли мар. 6 литра яхăн сĕт парать. Качака сĕтлĕхĕ виççĕмĕш хут пăранласан çеç туллин уçăлать.

Таса ăратлă качакасен хакĕ пĕчĕкех мар. Качака путеккине туяннă чухне ăратлăхпа ĕçлекен хуçалăхсен ăратлăх карттине кăтартма, унăн копине ыйтмалла. Тĕрĕссипе, лайăх качакана туянас тесен шăпах ăратлăх хуçалăхĕсенчен илмелле. Нумай чухне пайăр çынран туяннă качака таса ăратлă мар пулма пултарать. Çулталăкра качакана вунă уйăх сума юрать. Пăранличчен, икĕ уйăх, кантармалла.

Пирĕн республикăра çак качакана усракан йышлă. Ятарлă хуçалăхсенче те ĕрчетеççĕ вĕсене. Йĕпреçре пур. Качака туянас тесен ялхуçалăх министерствин сайтĕнчи пĕлтерÿсемпе паллашма пулать. Унта час-часах республикăри хуçалăхсем сутма тăратнă таблицăна тăратаççĕ. Унти вылькăхăн сутлăх хакне, йышне палăртаççĕ.

### Шкул пур-ши?

**Эпĕ вĕреннĕ чухнехи шкулсенчен халĕ хăшĕ те пулин ĕçлет-ши? Вăрнарти садовод-овощевод, пчеловод шкулĕ, Патăрьелĕнчи ветеринар-санитар шкулĕ, Саратоври киномеханик шкулĕ.**

**Федор АЛЕКСЕЕВ.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ.

Патăрьелĕнчи ветеринари шкулĕ хальхи вăхăтра ĕçлемест. Вăрнарти сельхозтехникумра ветеринари ĕçне вĕрентме пуçласассăн ăна унта куçарнă.

Вăрнарти плодоовощевода вĕрентекен шкул вара – 29 ПТУ. Вăл паянхи кунччен ĕçлет. Унта çулсеренех 350 çамрăка тĕрлĕ профессие вĕренме илеççĕ. Профессисем: вĕлле хурчĕн ăсти /пчеловод/, "B", "C" категориллĕ водительсем, повар, кондитер, автомеханик, ÿсен-тăран пăхакан /растениевод/ маçтăр, плодоовощевод, ТО маçтăрĕ. Вĕренекенсене стипенди тÿлеççĕ, кунне виçĕ хутчен тÿлевсĕр апат çитереççĕ, общежитипе тивĕçтереççĕ, çулçÿрев билечĕ /поселок тăрăх/ параççĕ. Ĕç практикине Чулхулара ирттерме май пур.

Саратоври киномеханик шкулĕ пирки вара çакна калама пулать. Унччен вăл мĕнле учреждени пулнă-ши? Училище, е техникум, е шкулахши? Унăн адресне пĕлмесĕр çав шкул никĕсĕнче мĕнле учреждени йĕркеленине калама май çук.

### Халăх сăнанинчен

- Ака уйăхĕ нÿрĕкпе пуян – çуртри тырри ăнса пулĕ, кĕр кăмпапа пуян пулĕ.
- Апрель пуçламăшĕнче юханшывсем ейĕве тухсан тырпул лайăх пулмалла.
- Ака уйăхĕн пуçламăшĕнчех аслати авăтсан çулла ăшă килет. Вăрман майăрĕ лайăх пулать.
- Ула курак турат çинче çунаттине усса тĕкне кăпăшлатса ларать – çумăра кĕт.
- Кураксем кÿлленчĕкре çăвăнаççĕ – ăшăтать.

### ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 02.04 | + 4 | – 3 | |
| 03.04 | + 3 | – 4 | |
| 04.04 | + 3 | – 3 | |
| 05.04 | + 5 | – 1 | |
| 06.04 | + 3 | – 3 | |
| 07.04 | + 6 | + 2 | |
| 08.04 | + 4 | + 3 | |

### КУН ТĂРШШĔ

| | | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 02.04 | 13.09 | 14 у.к. |
| 03.04 | 13.14 | 15 у.к. |
| 04.04 | 13.18 | уйăх тулать |
| 05.04 | 13.23 | 17 у.к. |
| 06.04 | 13.28 | 18 у.к. |
| 07.04 | 13.32 | 19 у.к. |
| 08.04 | 13.37 | 20 у.к. |

Кун тăршшĕ 13 сехет те 37 минут пулать, 6 сехет те 37 минут вăрăмланать.

## Чăх-чĕпе – тимлĕх, çемьене – тупăш

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

Каярахпа Саратов облаçĕнчен пирĕн ĕç йĕркелене пынине кура атте-анне каллех паха ăратлă чăх-автан кÿрсе килчĕç. Çапла аталанса пыратпăр.

Халĕ вĕсен хуçалăхĕнче мĕн тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк çук пулĕ. **Кохинхинпа Брама, Орпингтон** – кусем ашкакай валлилĕх те, çăмарта валлилĕх те лайăх. Унсăр пуçне илемĕшĕн тытаканнисем те пур: **Бентамка, Китай пурçăнĕ /шелковые/.** Ку чăхсем пĕчĕк пулсан та çăмарта аванах тăваççĕ иккен. Илемĕшĕн çеç тесе калаймăн.

Картишĕнче çуркунне ăшшипе киленсе тĕрлĕ ăратлă автансем мăнаçлăн уткаласа çÿретчĕç. Бентамка автанĕ, ытарма çук илемлĕскер, пĕчĕккĕскер, ыттисемпе ăмăртмалла шăрантарать çине-çинех. «Пит мăнаçлă вăл, леш пысăккисене те хирĕç тăма хăрамасть. Сиксе, вĕçсе тапăнать хăйне кÿрентерекене», – калаçать кил хуçи картишĕпе паллаштарнă май. Ивановсем **цесарка, путене, индоутка, кăркка...** тытаççĕ.

**– Пĕрремĕш хут куратăп чĕрĕ цесаркăсене. Питĕ кăсăк. Чăвашла ячĕ мĕнле-ши?**

– Вĕсене XIX ĕмĕрте Раççей патши I Николай хушăвĕпе ятарласа Африкăран кÿрсе килнĕ. Европа модипе. Цесарка – ирĕклĕ кайăк. Пирĕн тăрăхра вăрмансенче лайăх ĕрчесе кайнă, цесарка сунарне çÿренĕ. Ку – историрен. Чăвашла ячĕ çавăнпа çук-тăр. Цесарка – питĕ йăрă кайăк. Лайăх ĕрчет. Ирĕке тухса тĕм айĕнче йăва туса, çăмартисене пусса ларса хăех чĕпĕ кăларма пултарать. Чĕпписене киле ертсе килет. Апата тиркемеççĕ çак кайăксем. Çулла курăк, ÿпре-шăна, кăпшанкă тытма пит ăста. Шăрăхра хăйсене лайăх туяççĕ. Хĕлле сивĕрен хÿтĕлемелле паллах. Витере 15 градус ăшă пулсан, çутă вăхăтне кирлĕ пек йĕркелесен хĕле кĕричченех çăмарта тăваççĕ. Цесарка çăмарти путененни пекех питĕ сиплĕ. Кăшт шултрарах. Тĕрлĕ чирпе нушаланакансемшĕн чăн-чăн çăлăнăç. Ку тĕлĕшпе диетологсем çирĕплетсе панисем пур, – темĕн чухлĕ каласа пама хатĕр Алексей хăйĕн тусĕсем çинчен.

**– Мĕнле тăрантаратăр кун чухлĕ кайăк-кĕшĕке. Пăхма йывăр мар-и?**

– Шупашкар инçе мар, Ишек те çывăххах. Ирĕш, тырă, комбикорм туянатпăр, пахча çимĕç пĕçерсе çитеретпĕр. Хуть те мĕнле выльăха пăхасси те явaплă. Эпир чăх-чĕп ĕрчетме лайăх вĕренсе çитрĕмĕр те çак ĕçех аталантарасшăн. Вĕсем те пире хăнăхнă, пачах ютшăнмаççĕ. Читлĕхсенчен уçăлма кунсеренех кăларатпăр та хул пуççи çинех хăпарса лараççĕ. Ку ĕçе хăнăхайăп-ши теттĕм малтанах. Катя ертсе пынипе пĕчĕккĕн вĕрентĕм. Халĕ унран кая мар ăшталанатăп килти чĕрчунăмăрсемшĕн.

**– Килнĕ чухне сирĕн пысăк чăх вити пулĕ тенĕччĕ...**

– Кунта икĕ çул çеç пурăннипе пысăк витесем тăваймарăмăр-ха. Кăçал çĕнĕ витесем çĕклес шухăш пур, хăватăмăр çитсен.

Халĕ висĕ витере чăх-чĕп валли кирлĕ услови туса панă. Тĕрĕссипе, чăх-чĕп çитĕнтерес текенсене калатăп, вĕсем валли ятарлă пысăк вите кирлех те мар. Ăратлисем те эпир хăнăхнă ытти чăхсем пекех. Хĕлле витери температурăна кирлĕ пек йĕркелемелле, тирпейлĕхе, çутă режимне пăхăнмалла çеç.

**– Ăрат тасалăхне тытса пырас тĕлĕшпе мĕнлерех?**

– Кашни ăратăн хăйĕн читлĕхĕ. Çăмартисене уйрăмшар курупкăсене пуçтаратпăр, çырса палăртатпăр. Автансене ăратлăх фабрикисенче çĕнетсе тăратпăр. Икĕ хутчен Чăваш Республикин ялхуçалăх выставкине хутшăнтăмăр – 2010 тата 2013 çулсенче. Ялхуçалăх министерстви ăратлă чăх-чĕп ĕрчетес ĕçри çитĕнÿсемшĕн Диплом парса хавхалантарчĕ. Ăратлăхăн аттестаци паллисем пур. 2013 çулта ялхуçалăх куравĕнче 5 ăрата /цесарка, бентамка, путене, мускус кăвакалĕ, çара пĕсехеллĕ чăх/ I-мĕш вырăнпа палăртрĕç, тепĕр пилĕк ăрат – II-мĕш вырăн.

**– Чăх-чĕп ĕрчетекен ытти ăстасемпе хутшăнатăр-и?**

– Паллах. Республикăра интереслĕ ăратлă чăх тытакансене чылайăшне пĕлетпĕр.

**– Хăвăр сутнă чăх-чĕпе туянакансемпе кайран çыхăну тытатăр-и?**

– Туянакансене чăх-чĕпе мĕнле пăхмаллине тĕплĕн ăнлантаратпăр. Телефон номерне паратпăр /8-961-342-00-88/. Туяннă чухçăн шăнкăравласа канашлакансем чылай. Никама та хуравсăр хăварман пек.

Ивановсем патĕнче куна кунларăм темелле. Эпĕ çитнĕ чухне шăпах чăх туянакансем пынăччĕ. Икĕ тĕслĕ чăх илме пынăскерсем тем тĕрлине те туянчĕç. Тивĕçлĕ ăнлантарса пани, яваплăха туйса сутă туни кама ан килĕштĕр? Шăнкăравсем те килсех тăни хуçасен ĕçĕ чăннипех кирлине çирĕплетрĕç.

Ивановсен тепĕр енне, паттăрлăхне тесен те юрать, асăнмасăр хăварас килмест. Çак ĕçчен çемье 5 ача çитĕнтерет. Асли Валентина 13 çулта, республика пуçлăхĕ М.Игнатьев çуралса ÿснĕ яла – Янăша – вĕренме çÿрет, Елисей – иккĕмĕшĕ, 7 çулта, кĕркунне шкула чупма пуçламалла. Илюша 5, Анастасия 3, Василиса 2 çулсенче. Ачасем те ашшĕ-амăшĕ пекех вăр-вар пулни сисĕнчĕ. Урама уçăлма тухмашкăн пĕчĕкскерсем хыпаланса тумланаççĕ. Ачасем чăхчĕпе апатлантарма пулăшасшăн тăрмашаççĕ. Урама тухсан инçетре ан çÿреччĕр тесе ашшĕ капăр чучу лартса панă. Хăйăр карти пур. Халĕ кÿршĕри ачасем те Ивановсен тĕлнелле пуçтарăнаççĕ-мĕн. Ачасем куç умĕнче пуласан чунра лăпкă.

Ивановсем – хăйсен тăрăшулăхĕпе пурнăçа йĕркелесе, малашлăха ăнтăлса пурăнакан çемье. Вĕсем ялхуçалăхĕнче патшалăх тытса пымалли ĕçĕн пĕчĕк пайне хăйсем çине илнишĕнех тав сăмахне тивĕçлĕ. Ял пурнăçне аталантарассишĕн тăрăшнинче вĕсен тÿпи пуррине хыпарлама кăмăллă.

**Эльвира ИВАНОВА.**

## Тĕпелте чухне

### Сысна какай рулечĕ



**350 грамм сысна ашĕ, тăвар, авăртнă хура пăрăç, ÿсен-тăран çăвĕ, горчица кирлĕ.**

**Ăшлăх валли:** тăварланă 3 хăяр, 1 кишĕр, 100 грамм сысна сали. **Гарнир валли тата илемлетме:** макарон, пĕçернĕ кишĕр, петрушка.

Шăмăсăр аша çумалла, çÿхе касăксем туса касмалла, çапса тикĕслемелле, тăварпа пăрăç сапмалла.

Тăварланă пĕр хăяра илемлетме хăвармалла, ыттине тăрăхла 4-6 пай туса касмалла, кишĕре те çавăн пекех хатĕрлемелле.

Салăна çинçерех тăрăхсем туса турамалла. Кашни татăк çине 1-2-шер тăрăх хăяр, кишĕр тата салă хумалла. Рулет пек туса чĕркемелле. Хĕррисене хулăн çиппе çыхмалла. Рулетсене çатма çинче ÿсен-тăран çăвĕнче ăшаламалла. Ун хыççăн çулăма чакармалла, вĕри шыв кăштах хушмалла. Хупласа 10-15 минут пăшăхламалла. Рулета горчица кăштах сĕрмелле. Ешĕл çимĕçпе, кишĕрпе, тăварланă хăярпа илемлетмелле. Макаронпа çимелле.

### Пельмень



**Чуста валли: 3 стакан çăнăх, 1 çăмарта, çур стакан ытларах шыв, 1 чей кашăкĕ ÿсен-тăран çăвĕ, 1 чей кашăкĕ тăвар.**

**Ăшлăх валли: 250 грамм сысна какай фаршĕ, 200 грамм чăх какай фаршĕ, 2 сухан, тутине кура пăрăç, тăвар.**

Çăнăха аламалла, шыв, çу, çăмарта, тăвар хушмалла, чуста çăрмалла, çатăрка хутаçа 40 минутлăха хумалла.

Сухана вĕтĕ теркăпа хырмалла, фаршпа хутăштармалла, тăвар, пăрăç сапмалла.

Чустана çÿхе йĕтĕрлемелле, фарш хумалла, рулет пек туса чĕркемелле, 3-шер сантиметр касмалла. Пельмене пароваркăра çур сехет пĕçермелле.

Хăймапа çиме аван.

### «Пысăк çемье» пăтă



**1 банка пăшăхласа пĕçернĕ ĕне ашĕ /тушенка/, 1-ер стакан пăрçапа вир кĕрпи, 2 сухан, 1 кишĕр, лавр çулçи, 2 апат кашăкĕ томат соусĕ, тутине кура тăварпа пăрăç, ăшалама ÿсен-тăран çăвĕ кирлĕ.**

Пăрçана сивĕ шыва 2 сехетлăхе ямалла. Ун хыççăн вĕрекен тăварлă шывра вăйсăр çулăм çинче çурма писиччен пĕçермелле, вир кĕрпи хушмалла. Писиччченех çулăм çинче тытмалла. Пиçес умĕн аш, лавр çулçи хушмалла, пăрăç сапмалла.

Сухана çурма çаврашкан туса турамалла, кишĕре шултра теркăпа хырмалла, çу хушса пĕрле ăшаламалла, томат соусĕ ямалла, пăтратмалла.

Пăтта вĕрилле суханпа кишĕр соусĕпе çиме аван.

## Ӳсен-тăран тĕнчинче

# Тĕрĕс кӳршĕлентермелле

**Пахчаçимĕçе лартнă, акнă чухне тĕрĕс мĕнле кӳршĕлентермелле? Йăран хушшисене мĕнле ӳсен-тăран акма юрать?**

**Вениамин КОРОТКОВ.**
Элĕк районĕ.

"Кил-çурт, хушма хуçалăх" хаçатăн 10-мĕш номерĕнче пахчаçимĕç культурисене мĕнлерех черетлентермелли çинчен çырнăччĕ, таблицăпа та кăтартнăччĕ. Вулакансем пахчаçимĕç хăш культурине юнашар акассипе, хутăш йăрансем мĕнле йĕркелессипе кăсăкланни те палăрчĕ.

Армути, ӳхлĕм курăкĕ ӳсекен вырăнта ытти ӳсентăрана кансĕр. Вĕсем пурне те хуплама тăрăшаççĕ. Çавăнпа çак çумкурăксене ана çинче курсан вĕсенчен хăтăлма тăрăшăр.

Горчицăпа пăрçа килĕштерсе, пĕрне-пĕри пулăшса ӳсеççĕ. Пăрçа йышсисен тымарĕсем тăпрана азотлă япаласем кăлараççĕ. Пăрçа помидоршăн, çĕрулмишĕн, кишĕршĕн, редисла çарăкшăн, хăяршăн лайăх кӳршĕ. Ăна çак пахчаçимĕç йăранĕсем хушшине акма юрать.

Фасоль, нимĕç пăрçи хăярпа пĕрле лайăх çитĕнеççĕ.

Суханланса ӳсекеннисем /сухан, ыхра/, кишĕрпе, сельдерейпе, петрушкăпа /кусем – сунчăк евĕр вăрăллисем/ тата купăста йышĕнчисемпе /редис, купăста/ килĕштерсе ӳсеççĕ. Суханпа ыхрана кишĕр йăранĕ хушшине лартма юрать. Çĕрулмишĕн, помидоршăн, салатшăн, çĕр çырлишĕн, хăяршăн лайăх кӳршĕ. Сухан йăранĕ çывăхне чапăр курăкне, салтак тӳми чечекĕ /ромашка/ кăштах аксан аван.

Нумай пахчаçимĕçшĕн шпинат лайăх кӳршĕ. Шпинат тымарĕ тăпрана сапонин текен вещество кăларать, вăл нумай пахчаçимĕçшĕн усăллă /çĕрулми, кăшман, фасоль, помидор/. Шпината юр кайсанах акма юрать, ерипен çитĕнекен пахчаçимĕç йăранĕсем хушшинче те аван. Тĕп культура шăтнă тĕле вăл аталанма ĕлкĕрет, тăпра нӳрĕклĕхне упрать, ыттисене çитĕнме лайăх услови туса парать.



Тĕмлĕ фасольпе редис "туслă" ӳсеççĕ. Редиса тĕмлĕ фасоле лартиччен 2 эрне маларах акмалла.

Купăста сорчĕ йышлă: пуçлă купăста, чечеклĕ купăста , брокколи, брюссель купăсти, кольраби. Вĕсене пурне те тĕрлĕ суханпа, фасольпе хăшпĕр техĕмлĕх курăкĕсемпе пĕрле акма юрать /пĕтнĕк, шалфей, укроп/. Купăста çĕрулмипе юнашар лайăх ӳсет. Йăран хушшине акнă укроп купăста тутине пуянлатать.

Пăрăç базиликпа юнашар чухне аван туять. Вĕсем пĕр-пĕрне ӳсме пулăшаççĕ.

Хĕрлĕ кăшманпа юнашар кишĕр, купăста /чечеклисĕр пуçне/, редис, салат, петрушка, укроп юрăхлă.

Кавăн куккуруспа килĕштерсе çитĕнет.

Йӳç кăшман /редька/ кишĕре, хăяра, помидора, кавăна, шпината тиркемест.

Кориандр тăпра тытăмне лайăхлатать. Ун вырăнне тĕрлĕ пахчаçимĕç лартма-акма юрать.

Пĕтнĕк помидоршăн, купăсташăн аван.

Укроп салатпа, купăстапа, суханпа, хăярпа аван çитĕнет.

Пахчара исĕм ӳсет пулсан унти тăпрана пулăхлатма йĕркесем хушшине петрушка, кăшман, пăрçа, сухан акни аван.

Çĕр çырлишĕн петрушка, тĕмлĕ фасоль, сухан, ыхра, салат, купăста, кăшман – юрăхлă кӳршĕсем.

| Пахчаçимĕç | Мĕнпе кӳршĕлентерсен аван | Мĕнпе юнашар лартма юрамасть |
|---|---|---|
| Кавăн | Куккурус | Çĕрулми |
| Салат | Пуçлă купăста, кишĕр, хăяр, редис | – |
| Хăяр | Пăрçа, фасоль, укроп, помидор | Çĕрулми, кабачок |
| Куккурус | Пăрçа, кабачок, çĕрулми, хăяр, кавăн | – |
| Кăшман | Купăста, сухан, фасоль, салат | Горчица, шпинат |
| Кишĕр | Сухан, помидор, пăрçа, редис, йӳç кăшман /редька/ | Укроп |
| Ыхра | Помидор, кăшман | Купăста, пăрçа, фасоль |
| Кабачок | Куккурус | Çĕрулми |
| Петрушка | Помидор | Кишĕр |
| Пăрăç | Салат, хăяр, сухан | Çĕрулми, помидор, баклажан |

# Нарцисс – хитре куçлă чечек



Нарцисс – нумай çул ӳсекен чечек. Унăн тăван çĕршывĕ Вăтам Ази, Китай, Вăтаçĕр тинĕсĕн тăрăхĕ. Çак чечеке нумайăшĕ юр кайсассăнах çеçке çурма ăнтăлнăшăн, çурхи пахчана илем кӳнĕшĕн, ырă шăршишĕн килĕштерет пулĕ. Хальхи вăхăтра агрономселекционерсем нарциссен тĕрлĕ сорчĕсене туса кăларнă: 25 ушкăн тата вĕсен нумай гибричĕсем.

Çынсем авалтанах нарциса тĕрлĕ асамлăхпа пуян тесе палăртнă. Хĕвел тухăç, кăнтăр енчи халăхсем çак чечеке "наргис" теççĕ: "Нар" /хитре/ + «гис» /куç/ = хитре куç. Çапла мар-и? Шурă çеçкерен илĕртӳллĕ куçсем тинкереççĕ.

Нарциса юнтармăш чечек тееймĕн. Вăл тăпрана та питех тиркемест, йывăççем айĕнче те çитĕнет. Ăна пăхасси кăткăсах мар. Пĕрре лартатăн та темиçе çул çуркунне çак черченкĕ чечексемпе киленсе пурăнма пулать. Çутă лайăх ӳкекен вырăнта хăйăрлă хура кăпка тăпра çинче нарцисс чечекĕн пахалăхĕ ӳсет: çеçкисем шултра, суханĕсем те лайăх аталанаççĕ.

Нарциса кĕркунне август вĕçĕнче – сентябрь пуçламăшĕнче лартмалла. Тăпрана 30-35 см тарăнăш чавса кăпкалатмалла. 1 тăваткал метра 3-4 кг торф е компост, 2 апат кашăкĕ суперфосфат сапмалла. Пахчари тăпра «йывăр» пулсан хăйăр хушмалла. Нарцисс суханĕсене суйламалла, марганцовкăн шупка шывĕнче 1-2 сехет тытмалла. Сухансене 12-15 сантиметр тарăнăшне 10-12 сантиметртан лартмалла. Хĕлле валли чечек йăранĕсене улăм витсе хӳтĕлемелле. Çуркунне юр кайсанах улăма пуçтармалла.

Нарцисс – çурхи чечек. Çавăнпа ăна çуркунне лайăх пăхмалла. Чечек папкисем çĕкленнĕ чухне тутлăхлă япаласемпе апатлантармалла. 1-ер чей кашăкĕ сульфат калине, мочевинăна, суперфосфата 10 литр шывра ирĕлтермелле. 1 тăваткал метра 5 литр çак шĕвекпе шăвармалла.

Тепĕр хутчен нарциса çеçке çурма тытăннă вăхăтра апатлантармалла. 10 литр шыва «Агрикола № 7» тата «Нитрофоска» 1-ер чей кашăкĕ хушмалла. Çанталăк типĕ тăрсан нарцисса çеçке çурса тăкăннă хыççăн та шăвармалла. Ирсерен шăварсан аванрах. Çакă нарциcс суханĕсене лайăх ӳсме, хĕле хатĕрленме кирлĕ.

Ăна 3-5 çултта пĕрре куçарса лартмалла. Мĕншĕн тесен темиçе çул хушшинче нарцисăн суханĕсен тĕмĕ çĕре пысăкланса каять, чечексем вĕтелме тытăнаççĕ.

Нарциса суханĕсемпе куçарса лартса ĕрчетеççĕ. Сухансене çулçăсем хăрса типсенех кăлармалла, çĕре силлесе тасатмалла, 3-4 кун сулхăнра типĕтмелле. Унтан тĕплĕн суйламалла: ватă сухансене çамрăккисенчен уйăрмалла, киввисене, япăххисене пăрахмалла. Суйласа тасатнă сухансене «Хом» препаратпа дезинфекцилемелле /10 литр шыва 50 г/, пĕр эрне сулхăнта типĕтмелле те лартиччен упрама нӳхрепе /18°/ хумалла.

# Патшалăх пошлинисем ӳснĕ

2015 çулта патшалăх пошлинисем ӳснĕ.

Халĕ ют çĕршыва каймалли паспорт тутарма, водитель удостоверенине илме, суда тавăç тăратма, мăшăрсен уйрăлма тата ытти хăшпĕр кирлĕ документсене илме нумайрах тăкаклanмалла.

Ют çĕршыва каймашкăн паспорт тăвас тесен 2015 çулччен 1000 тенкĕ пулнă, халĕ 2000 тенкĕ.

14 çула çитменнисем валли ют çĕршыв паспорчĕ тутарма унччен – 300 тенкĕ, халĕ 1000 тенкĕ.

Электронлă паспорт /пластик карточка/ тăвас тесессĕн тата нумайрах тăккаланмалла: унччен – 1200 тенкĕ, халĕ – 1500 тенкĕ.

Мăшăртан уйрăлас текенсен те халĕ нумайрах кăларса хума тивет: 650 тенкĕ. Уйрăласси пирки: ЗАГС урлă уйрăлакансемшĕн тӳлев кăшт пĕчĕкрех пулать.

Суд урлă уйрăлакансен тӳлев виçи 650 тенкĕ.

Водитель удостоверенине илес текенсен те кăçалтан самаях тăккаланма тивет. 2015 çулччен тӳлев виçи 800 тенкĕ пулнă, халĕ вăл 2000 тенкĕ.

Çавăн пекех кирлĕ ытти документа тунă чухне те ытларах тӳлеме тивет. 14 çул тултарсан паспорт тумашкăн унччен 200 тенкĕ, халĕ – 300 тенкĕ. Паспорта çухатса е пăсса çĕнĕрен тума тивсен тӳлев виçи тата пысăкрах.

# Пăрçа хурчĕ – брухус

**Кĕркунне çур кило пăрçа туяннăччĕ, вăрлăх тăвас тенĕччĕ. Хĕл каçа пăрçана мĕн шăтарса пĕтернĕ-ши? Йăлтах шăтăк-шăтăк.**

**Юрий ПЕТРОВ.**
Красноармейски районĕ.

Пăрçана тырă кĕви – вĕтĕ нăрă – шăтарса пĕтернĕ. Брухус нăрри /гороховая зерновка/ тесе палăртаççĕ ăсчахсем ăна. Нăрă пăрçа е фасоль чечеке ларнă чухне вĕççе тухать те чечек шăркипе тăранса пурăнать. Вăл сарă-хăмăр тĕслĕ, тăрăхла, 4-5 мм тăршшĕ. Унăн çăмарти 0,6-1 мм. Симĕс пăрçа çинче аван курăнать. Тин тухнă хурт сарă тĕслĕ, каярах шуранкăланать. Хурт пăрçана шăтарса кĕрет те нăрă пулма хупланса ларать. Хуртран куколка пулас вăхăт 30-40 кун, куколка 20-25 кунран нăрă пулса тăрать. Çĕршывăн кăнтăр енче, ăшăрах çĕрте нăрă хăвăртрах аталанать, сивĕрех тăрăхсенче аталану вăрахрах пырать.

Хурт куколка пулас умĕн пăрçа хуппине касса кĕрет, пăрçана кăшланăçемĕн куколка пулса выртать. Шăпах çакнашкал сиенлĕ пăрçа вăрлăхĕ туянна та эсир. Хĕле кĕнĕçемĕн нăрăсем пăрçа хуппине шăтарса тухаççĕ.

Кăнтăр енчи çĕрсенче пăрçа нăрри çуллахи вăхăтра нăрă пулса ĕлкĕрет те пăрçаран тухса вĕçет. Нăрă тырă ампарĕсенче, сухаламан ана çинче, тăкăнса



юлнă пăрçа ăшĕнче хĕл каçать.

Пирĕн тăрăхра брухус хурт пăрçана пуçтарса илнĕ вăхăт тĕлне нăрă пулса çитеймест. Çавăнпа куколкăсем пăрçа ăшĕнче юлаççĕ. Çакнашкал пăрçана шыва ярсан путмасть, çиеле хăпарать. Ăна акма юрамасть.

Сиенлĕ хурта агротехника мелĕсемпе пĕтерме пулать. 1/Пăрçана çуркунне иртерех акмалла. 2/ Брухуса парăнман çирĕп сортсене суйламалла. 3/ Пăрçана горчицăпа акни кăпшанкăна хăратать. 4/ Писсе çитнĕ пăрçана вăхăтра пухса кĕртмелле. 5/ Кĕрхи çĕртме тумалла.

Хими мелĕсем. Акмалли пăрçана гексахлоранпа имçамлани витĕмлĕ. Кĕркунне тĕрĕс имçамласан çак нăрăн 87-99% пĕтет.

# Апрелĕн 1-мĕшĕ – кулăш кунĕ

Икĕ арçын калаçать:
– Манăн арăм ача кĕтет.
– Манăн та.
– Эсĕ кама кĕтетĕн?
– Хĕр. Эсĕ вара?
– Арçын ача.
– Мĕншĕн?
– Радиопульта пăхăнакан вертолетпа выляс килет...

* * *

Бармен:
– Сирĕн стакан пушă. Тепре кирлĕ мар-и?
– Икĕ пушă стаканпа мĕн тăвасха ман?

* * *

Общежитинче пурăнакан пилĕк студент пельмень пĕçернĕ. Чашăкра пĕр пельмене юлать те пурте пĕр-пĕрне: эсĕ çи, эпĕ çиместĕп теççĕ. Çапла тавлашнă вăхăтра пӳлĕмре çутă сӳнет, хытă кăшкăрни илтĕнет. Кăшт вăхăт иртсен çутă пулать. Куç умĕнче çапла ӳкерчĕк: пельмень патне туртăннă алă çине харăсах тăватă вилка тăрăнтарнă.

* * *

Пĕлтерӳ: Опытлă детектив. Сирĕн мăшăр хăйне мĕншĕн çапла телейлĕ туйнине туххăмрах тупса палăртать.

* * *

– Салам, кӳршĕ! Пĕчĕкки мĕнле унта сирĕн?
– Пепке лайăххах туять-ха хăйне. Хамăр вара çывăрса тăранаймастпăр. Çакă вăт сывлăха сиен кӳрет кăштах...
– Настук мĕнле тата?
– Настя эпĕ-çке! Çимуна курсан хăв ĕнер сăмах хушмасăрах иртсе кайрăн вĕт, палламарăн...

* * *

«Нивушлĕ пирĕн çуртра текех Интернет ĕçлемест?» – савăнать арçын кухньăран тутлă апат шăрши кĕнине сиссе.

## Хăтлăх кӳретпĕр

# Меллĕ пӳлĕм



Ачасем питĕ хăвăрт ӳсеççĕ-и? Анчах-ха сирĕн тĕпренчĕкĕр урайĕнче машина тĕксе упаленетчĕ – халĕ ак шкула çӳреме вăхăт çитнĕ. Ачасен пӳлĕмне хăтлăлатнă чухне вĕсем ӳснине те шута илмелле. Мĕнле тĕс, сĕтел-пукан ачана юрăхлă? Çутă хăш енчен пулсан аван – çакнашкал нумай ыйту çуралать ĕçе пуçăннă майăн.

Ача пӳлĕмĕ темиçе тĕллевлĕ пулмалла. Унта канмалли вырăн, вĕренмелли тата физкультура кĕтесĕсем кирлĕ.

Ачасем валли çутă пӳлĕм суйламалла, вăл урама тухмалли алăкран аяккарах пулсан аван.

Ачасем çара уран çӳреме юратаççĕ. Çавăнпа вĕсен пӳлĕмĕнчи урай ăшă пулмалла. Урай сикнине, ялпала ӳкернине чăтаканскер пултăр. Вылямалли кĕтесре çăм кавир сарсан аван.

Стенана хут обой çыпăçтарма е сăрласа илемлетме юрать. Хăвăр алăпа ӳкерсе илемлетнĕ стена хаваслă, килĕшӳллĕ пулса тухать. Ӳкернĕ чухне ача кăмăлне шута илсен – пушшех те.

Ачасен пӳлĕмĕнчи сĕтел-пукана, кравате суйланă чухне çирĕплĕхе, хăрушсăрлăха тĕпе хурăр. Шĕвĕр кĕтессем, кăнтарса тăракан вĕçсем ан пулччăр. Çутçанталăк материалĕсенчен хатĕрленĕ сĕтел-пукан туянма тăрăшăр. Вăл экологи тĕлĕшĕнчен таса пулмалла.

Люстра вырăнне маччара темиçе светильник çирĕплетме пулать. Ĕç кĕтесĕнче хушма çутă – тепĕр лампа е светильник – пулмалла. Ачапча пӳлĕмĕнче выключатель тĕрĕс вырнаçтармалла. Вăл урайĕнчен пĕр метртан çӳллĕрех ан пултăр. Ача хăй тĕллĕн çутма, сӳнтерме пултартăр.

Пӳлĕмре кирек хăш вăхăтра та сĕтел-пукана вырăнтан куçарма май пулмалла. Стенана ача ӳснĕçемĕн çĕнĕ тĕссемпе пуянлатма юрать. Тĕс пирки. Ачасен пӳлĕмĕнче уçă янкăр тĕссемпе усă курма ан именĕр. Тĕссем ачасен кăмăлне йĕркелеме пулăшаççĕ. Анчах тĕссемпе ытлашши выляни сиен кӳме те пултарать. Виçене пĕлсе йĕркелемелле.

Пӳлĕме йăлтах ковролин сарма юрамасть. Çемçе теттесем те тусан нумай пуçтараççĕ. Урайĕнче вылямашкăн пĕчĕкрех кавир пулсан çителĕклĕ. Ăна таçатса тăма çăмăлрах.

# Кăчкă уявĕ

Иисус Христос Иерусалима кĕнĕ кун кăçал апрель уйăхĕн 5-мĕшĕнче килет. Çак уява Мăнкун умĕн пĕр эрне маларах палăртаççĕ. Православи тĕнне ĕненекенсем çак кун кăпăшка папкаллă кăчкă турачĕсем тытса чиркĕве васкаççĕ.

Анчах мĕншĕн кăчкă? Евангелие илес-тăк унта кăчкă пирки пачах та асăнман. Уявăн чăн пĕлтерĕшĕ мĕнле?

Çакна ăнланма Евангели пулăшать. Пирĕн эрăн 30-мĕш çулĕ. Кĕçех еврейсен уявĕ – Пасха. Иерусалима Иудея çĕрĕн çар прокураторĕ Понтий Пилат пăлхавлă еврейсен уявĕ мĕнле иртнине сăнама çитнĕ. Христос хăйĕн вĕренекенĕсемпе Иерусалима кĕме хатĕрленет. Хула халăхĕ Христос тĕлĕнтермĕшĕсене курса хăпартланнă. Христос хулана çамрăк, халиччен çын ларман ашак çине утланса кĕрет. Ун айĕнче çар урхамахĕ мар, лăпкă пĕчĕк ашак. Çакăнпа Иисус тĕнчене лăпкăлăх, тăнăçлăх илсе килнине кăтартать. Иерусалим халăхĕ пальма турачĕсемпе сулкалашать, ашак утас çул çине пальма турачĕсем сарать. "Осанна, осанна!" /пире çăл/ – кăшкăраççĕ çынсем, Христоса чăн патшана кĕтнĕ пек кĕтсе илеççĕ. Халăх Христосран çӳлти хăват пулăшнипе Рим оккупанчĕсенчен хăтарасса кĕтет.

Анчах Христос вăрçăпа аркатма килмен. Вăл этем йĕркине пăсмасть. Мĕншĕн тесен чунпа тасалмасан революциилле улшăну ырлăх кӳме пултараймасть.

Иисус Иерусалимра хăйне мĕн кĕтнине йăлтах пĕлет. Вăл Гефсимани садĕнче хăйĕн вĕренекенĕсемпе килес пулăмра хăйне хăват пама çӳл тӳпери Ашшĕнчен пил ыйтать. Вĕрентекенĕсене кĕл тума йăлăнать.

Гефсимани садĕнче Иисуса тытса çыхаççĕ. Тăватă кун каялла Христоса чăн патша пек саламланă, хавхаланнă халăх халĕ Иисуса пĕтерме ыйтса кăшкăрашать. "Осанна, осанна" кăшкăрнă халăх çăлăнăçа тавăрупа тивĕçет. Пăталанă Иисус çӳлти Ашшĕнчен вĕсене каçарма ыйтса йăлăнать...

Çав вăхăтри пулăмсене евĕрлесе халĕ çынсем Христос Иерусалима кĕнĕ куна чĕрĕ туратсемпе кĕтсе илеççĕ. Тухăçри христиансем финик пальмин çулçисемпе, лавр турачĕсемпе, чечексемпе палăртаççĕ. Пирĕн тăрăхра чи малтан чĕрĕлекен йывăç – кăчкă. Çавăнпа кăчкă турачĕсем тытаççĕ.



# Утюга мĕнле тасатмалла?

Хальхи вăхăтри çĕнĕ технологипе тунă утюгсене те тĕпне çунасран хӳтĕлесех пĕтерейменççĕ. Паллах, утюг тĕпĕ таса мар чухне ялпалана якатасси кăткăсланать. Эппин, ăна тасатмах тивет.

**Утюгри шыв лĕкĕленнин тата утюг тĕпне çуннин сăлтавĕсене пăхатпăр.**

- **Утюгри шыв лĕкĕленнин тĕп сăлтавĕ** – ялпалана пĕрĕхме утюга мĕнле шыв тултарнинче. Тĕрĕссипе утюга шыв тултарнă чухне шыв мĕнли пирки шутласах та каймастпăр – таса пултăр çеç. Шыв пăрăхĕнчен е çăлтан – пурпĕрех. Тĕрĕссипе вара хулари шыв пăрăхĕсенчен юхакан шывра та тасатмалли ялпала е ытти минераллă хутăш сахал мар. Çăлтан ăснă шывра та лĕкĕленекен ялпаласем çителĕклех. Çавăнпа утюга ялпанах вĕресе сивĕтнĕ шыв ямалла.

**Утюг тĕпĕ çунса хуралассин сăлтавĕ те тĕрлĕ.**

- Нумай чухне эпир ялпалана якатма утюга кирлĕ температурăран вăйлăрах хĕртетпĕр.
- Çуса типĕтнĕ ялпалара мĕн чухлĕ те пулин порошок, чӳхемелли хутăш юлатех. Хытă хĕртнипе вĕсем утюг тĕпне çунса çыпçăнаççĕ.
- Утюг тĕпĕнчи шăйрăксем те тĕпне çунтарма пулăшаççĕ.

**Халĕ утюга мĕнле тасатмаллине пăхса тухăпăр.**

Чейниксене шыв лĕккинчен тасатмалли порошока е шĕвеке туянмалла. Инструкцире çырнă виçене шывра ирĕлтермелле те утюга тултармалла. Сăмсине çӳлелле туса утюга хытă вĕрилентерме лартмалла. Шыв пăсланса пĕтиччен тытмалла, вĕретсе сивĕтнĕ шыв ямалла, таса, кирлех мар катанпир пусма таткине 2 минут утюглалла. Утюг ăшĕ тасалса çитиччен /2-3 хут/ çак ĕçе тумалла.

**Утюг тĕпне тасатасси вăл мĕнрен пулнинчен те килет. Çак меслетсем пурне те юрăхлă.**

- Утюг тасатмалли ятарлă кăранташсем. Вĕсем керамика тĕпе те, ытти валли те юраççĕ. Инструкципе килĕшӳллĕн тасатмалла.
- Апат содипе шывран пăтă пек хутăш тумалла, кăшăркка пусма таткипе утюг тĕпĕнчи вараланчăк тĕлсене сăтăрса тасатмалла, шывпа çуса ямалла.
- Вĕретсе илсе лĕплентернĕ шыва пĕр пек виçепе лимон сĕткенĕ хушмалла, таса татăкпа йĕпетсе утюга сăтăрмалла.
- Шăл тасатмалли пастăпа нӳрĕк пусмана сăтăрмалла.
- Вĕри утюгпа уксуспа йĕпетнĕ пусмана якатмалла.

Нихăçан та утюг тĕпне пралук мунчалапа, çĕçĕ вĕçĕпе ан хырăр. Утюг тĕпĕ часах юрăхсăра тухма пултарать.

# Кăмакаçă ĕçне вĕренме

**Хамăн алăпа пӳрте ăшăтмалли кăмака ăсталасшăн. Мĕнле кĕнеке вуласа вĕренме пулать-ши кăмака тăвас ĕçе.**

**Виктор ПРОКОПЬЕВ.**
Йĕпреç районĕ.

Кирпĕчрен кăмака тăвас текенсем валли ятарлă литература чылай. Вĕсенче кăмака планне, ăна кирпĕчпе мĕнле купаламалли, çавăн пекех ăна тума мĕнле инструментсемпе усă курмалли çинчен пурне те ăнланмалла çырса кăтартнă. Акă вĕсенчен хăшĕ-пĕри:


Буслаев К.Я. Как самому сложить бытовую печь. – М.: Стройиздат, 1975.

Воропай П.И. Справочник сельского печника. – М.: Стройиздат, 1982.

Ковалевский И.П. Печные работы. Учебник для подготовки рабочих на производстве. – М.: Высшая школа, 1973.

Михайлусенко Н.Е. Как сложить экономическую бытовую печь. Краснодар: Книжное издательство, 1983.

Смирнов И.В. Пожарная безопасность сельского дома. – М.: Росагропромиздат, 1988.

Соснин Ю.П., Бухаркин Е.Н. Бытовые печи, камины и водонагреватели. – М.: Стройиздат, 1984.

Шепелев А.М. Как построить сельский дом. – М.: Россельхозиздат, 1985.

Шепелев А.М. Кладка печей своими руками. – М.: Россельхозиздат, 1983.

Иванов В.В. Хороша семейная баня. Чебоксары, 2013.


Çак кĕнекесене кирек хăш библиотекăра та тупса вулама пулать.

Харпăр хăй вăйĕпе кăмака тăвас текенсене ятарлă кĕнекесем туянма сĕнетĕп. Вĕсене кĕнеке лавккисенче сутаççĕ.

**Василий ИВАНОВ,**
**инженер-строитель**

# Усăллă канашсем

- Тĕтĕмленĕ кăлпасси хуппине сӳме кансĕр. Ăна малтан çур минутлăха сивĕ шыва ямалла.
- Сивĕтмĕше упрама хуриччен аша çумаççĕ. Какая пăр çине те хумаççĕ – ирĕлтерсен унăн тути улшăнать.
- Шăн селедка хăвăртрах ирĕлтĕр тесен ăна сивĕ шыва хумалла /1 килограмм пулла 2 литр шыва/. Унта 2 кашăк тăвар хушмалла, çапла майпа шыва тутлăхлă ялпаласем сахалрах куçаççĕ.
- Рис пăттине сĕтпе пĕçернĕ чухне сахăра тӳрех яма кирлĕ мар – рис япăх пиçет. Вĕренĕ шыв кăштах илсе сахăра ирĕлтермелле, пăтă пиçсен хушмалла.
- Майонеза хăймапа улăштарма пулать. Хăймана пĕçернĕ çăмарта сарри /вĕтетсе/ тата кăштах горчица ямалла – усăллă çимĕç хатĕр те.
- Тăварпа техĕмлĕхсене яшкана пиçес умĕн хушаççĕ.

## Патшалăх пулăшăвĕ

# Сахал тупăшлă çемьесем валли

Раççейре кашни çемьех, финанс енчен йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳксен патшалăхран пулăшу илме пултарать. Пулăшу тĕрлĕрен: çăмăллăх /льгота/ е пособи. Сахал тупăшлă çемье статусне илме мĕн май парать? Çемьен вăтам тупăшĕ кашни çын пуçне çак регионти пурăнма кирлĕ виçерен /минимум/ пĕчĕкрех пулни.

Кашни регионтах çак виçе тĕрлĕрен.

Сахал тупăшлă статуса нумай ачаллă тулли çемье, нумай ачаллă ашшĕ е амăшĕ çеç пур çемье илме пултарать. Тупăш виçи пĕчĕк пулсан тата ытти енĕпе те сахал тупăшлă çемье статусне илме пулать. Тупăша шута илнĕ чухне çемьен кашни членĕ илекен пособие те кĕртеççĕ.

Раççейре мĕнпур регионсенче сахал тупăшлă çемье валли пурăнмалли çурт-йĕр ĕçĕсемшĕн тӳленĕ чухне çăмăллăх пани – субсиди – пур. Субсидие илме тӳлевшĕн парăм çуккисем е парăма ятарлă графикпа татса пыракансем тивĕçеççĕ.

Сахал тупăшлă çемье тата укçа пулăшăвне /материальная помощь/ тивĕçме пултарать. Ăна тивĕçес тесен социаллă хӳтлĕх пайне кайса ыйту /заявлени/ çырмалла. Ку пулăшу пĕр хутчен çеç лекет.

Пулăшăва ачасем те тивĕçеççĕ. Сахал тупăшлă çемьесем валли патшалăх тĕрлĕрен мелсемпе пулăшу йĕркелет. Пулăшăвăн тĕрлĕ мелĕсене ача ӳсĕмне кура та палăртаççĕ. Вĕсен тĕсĕсене те социаллă хӳтлĕх пайĕнче /органĕнче/ ыйтмалла.

Питĕ йывăр лару-тăрăва лексен /ăна çирĕплетсе памалла/ çемье адреслă пулăшу илме документсем тăратма пултарать. Ку çивĕч лару-тăрупа çыхăннă пулăшу /экстренная мера поддержки/. Пулăшу кварталта пĕрре е çулталăкра пĕрре пулма пултарать.

Сахал тупăшлă çемьесенче пурăнакан ачасем 2015 çулта çак çăмăллăхсемпе усă курма пултараççĕ:

1. Вуза кĕме экзамен панă чухне;
2. Ача висĕ çула çитиччен сĕт кухнисенче;
3. Апатланмашкăн е тата тӳлевсĕр апат-çимĕç продукчĕсем илме;
4. Обществăлла транспортра тӳлевсĕр çӳреме;
5. Спорт тата шкула çӳремелли формăсем туянса тăкакланнă укçана саплаштарма;
6. Шкул столовăйĕнче тӳлевсĕр апатланма.

Хăш-пĕр чухне çынсем хăйсене лекекен çăмăллăхсем çинчен пĕлмесçĕ те. Мĕнле пулăшăва лекме пултарни çинчен социаллă хӳтлĕх пайне кайса ыйтмалла. Пулăшăва тивĕçессĕн кирлĕ документсене пухса çак пая тăратмалла. Мĕнле документсем кирлине те социаллă хӳтлĕх пайĕсенче ăнлантарса пама тивĕç.

# Улма-çырла йывăçĕсене касмалла

Йывăçсене вăйлă сивĕсем иртсессĕн касмалла. Ку пирĕн тăрăхра март вĕçĕ - апрель пуçламăшĕ тĕлнелле. Каснă кун сывлăш температури нуль градуса çывăх пулсан аван. Каçхи сивĕ – 10 градусран вăйлăрах ан пултăр.

Хĕл хыççăн улма-çырла йывăçĕсене лайăх тĕрĕслемелле. Çамрăк йывăçсене мулкач, шăши кăшласа сиенлемен-и? Сăтăрçăсем кăшланă е шăнса сиенленнĕ вырăн тупăнсан çав тĕле çивĕч çĕçĕпе асăрханса хырса тасатмалла. Тимĕр е пăхăр купоросĕн шĕвекĕпе дезинфекцилемелле, сад сăмали /вар/ сĕрмелле.

Улма-çырла йывăçне каснă чухне шута илмешкĕн: малтан ватăраххисене касмалла. Мĕншĕн тесен чечек папкисем çулçă папкисенчен иртерех вăранаççĕ. Çимĕç паман çамрăк йывăçсене 10-14 кун каярах касма юрать. Мĕншĕн тесен вĕсен чечек папкисем çук.

Çакна та каламалла: улмуççине малтан касмалла, вăл каçхи сивĕсенчен питех аптрамасть. Сливăна, чиене, грушăна, черешньăна апрель вĕçнелле касмалла. Вĕсене çеçке çурма тытăничченех касма юрать.



Ĕçе пуçăниччен йывăçа лайăх пăхса çаврăнмалла, хăш туратсене касмаллине палăртмалла. Хăрнă, хуçăлнă, шалалла ӳссе йывăçа чăтлăхлантаракан туратсене иртмелле. Ытлашши туратсене тĕп вулă çуммипех касмалла, пĕчĕк тункатасем хăвармалла мар. Пĕр сантиметртан хулăнрах туратсене каснă хыççăн сурана тасатса сад варĕпе сĕрмелле.

# Кăсăя



Пирĕн тăрăхра темиçе тĕрлĕ кăсăя /синица/ тĕл пулать. Чи пысăкки – пысăк кăсăя – 15 см вăрăмăш, 20 грама яхăн. Ытларах хутăш вăрмансене, садсене кăмăллаççĕ. Кăсăя хĕл каçма кăнтăра вĕçмест. Ытларах пĕр вăрманта тĕпленсе пурăнаççĕ вĕсем. Вăхăтран-вăхăт çеç апат шыраса çула тухаççĕ. Çурçĕр енчерех пурăнакан кăсăясем хĕл каçмашкăн пирĕн тăрăхалла куçаççĕ.

Кăсăя – чăн-чăн ĕçчен. Хытă шĕвĕр сăмсипе вĕсем йывăç хуппи хушшинчи кăпшанкăсене, вĕсен çăмартисене, хуртсене пуçтарса çиеççĕ, вăрмана тасатаççĕ.

Хĕллехи вăхăтра лăсăллă йывăç йĕкелĕсен варрипе, шăнса хытнă кăпшанкăсемпе, ытти йывăç çимĕçĕсемпе тăранса пурăнаççĕ. Хĕлле апат шыраса час-часах çын пурăнакан вырăна пыраççĕ. Çакса панă сырăшсем çинче апат пулсан хавасраx сăхаççĕ.

Кăсăя мăшăрпа пурăнать. Аçипе ами пĕрлехи вăйпа йăва çаваăраççĕ. Йăвана йывăç хăвăлĕсенче, улатакка шăтарса тунă хăвăлсенче, çĕрĕк тункатa, йывăç хуппи хушшинче вĕтĕ туратсенчен, типнĕ курăксенчен, лаша çилхи, çăм, ытти вак-тĕвекрен çавăраççĕ. Кăсăя 10 яхăн çăмарта тăвать, 2 эрне пусса ларса чĕпĕ кăларать. 3 эрне ытла чĕпĕсене мăшăр ырмиканми пăхать. Кунне 300-350 хут апат йăтать.

Кăсăя вăрмана, уй-хире упрать, çут çанталăкра тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Этемшĕн те чăн-чăн тус. Эпир кăсăясене хĕлле тăрантарни çулла тăррипех таврăнать.

# Компост тăпрана пулăхлатать

Компостпа çĕр ĕçченĕ авалтанпах усă курнă темелле. Тăпра çемçе те сывă пулсан унран илекен тупăш та самаях ӳснине пĕлмен çын çук. Çавăнпа асаттесем усă курнă мел паянхи куншăн та пĕлтерĕшлĕ.

Компост тени латинла «compositus" сăмахран килет. Вăл органикăллă удобрени – тислĕк. Ăна ӳсен-тăран, выльăх-чĕрлĕх каяшĕсенчен минераллă имçам хушса чĕрĕ микроорганизмсем пулăшнипе çĕртсе тăваççĕ. Компост тăпра тытăмне лайăх витĕм кӳрет. Компостра пулăхлă япаласем торфринчен те, тислĕкринчен те нумайраххине палăртаççĕ ăсчахсем.

Компост хатĕрлеме кил-çуртра юлакан ăпăр-тапăр лайăх каять. Çумкурăк, пахчаçимĕç юлашкийĕ, кивĕ хут-хăмăр, кĕл, улма-çырла хуппи, юрăхсăра тухнă апат, пăчкă кĕрпи – йăлтах компоста юрăхлă.

Полиэтилен хутаçсене, витĕрсене компоста яма юрамасть.

Хăвăртрах пулса çиттĕр тесе унта кăштах извеç тата минераллă удобрени хушма юрать.

Компоста çĕрмешкĕн сывлăш кирлĕ. Çавăнпа купана çу каçиччен 3-4 хут сенĕкпе пăтратмалла. Купа хĕррисене ăмансем ямалла. Компост вăйлă çĕрнĕ чухне вĕрилет. Çавăнпа ăмана вĕри çĕре яни вырăнсăр. Купана кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, е ытти выльăх каяшне хушмалла, ĕне каяшне шыва ярса ик-виçĕ кун тытмалла, ăна купана сапмалла.

Компоста хăвăрт пулса çитме пулăшакан хатĕр препарат эффект, Байкал ЭМ-1 хушма юрать.

Компост тăпрари нӳрĕклĕхе упрама пулăшать. Лайăх пулса çитнĕ компост тĕпренет, кĕреçе



çумне çыпăçмасть, йӳçек шăршă кĕмест. Сывлăш температури нуль градусран çӳлерех чухне компост пуласси 1 уйăхран пуçласа 4 уйăхчен пырать. Купара хытă япаласем нумай пулсан çĕресси вăрахрах тăсăлать.

Компоста тăпрана кĕркунне сухаланă чухне те, çуркунне çĕре кăпкалатнă чухне те хушма юрать. Йывăç-тĕм лартнă майăн шăтăка тăпрапа хутăштарса ямалла, калча лартнă чухне путăкри тăпрапа хутăштармалла.

# Вĕлле хурчĕ аташмĕ



Вĕлле хурчĕсем нектар пуçтарма пуçлас умĕн кашни çуркуннех йĕри тавралăха вĕçсе пăхса çавăрнаççĕ. Вĕсем вĕçсе çаврăнакан тавралăх 3 çухрăм. Çак радиусра киле таврăнма кирлĕ тĕрлĕ паллăсене питĕ лайăх астуса юлаççĕ. Паллă /ориентир/ вырăнне йывăç, вăрман хĕрри, çул, тĕрлĕ çурт-хуралтă тата ытти те кĕреççĕ.

Енчен те утарçă вĕллене унччenхи вырăнтан куçарса каять тăк тепĕр ирхине нектар пухма тухнă вĕлле хурчĕсем хăйсен килĕ тĕлне çул тупаймаççĕ. Çухалса кайса вилсе пĕтме пултараççĕ. Çавнашкалах вĕсем вĕçекен вырăнта ăнсăртран хăвăрт улшăнусем пулсассăн та вĕлле хурчĕсем арпашăнаççĕ. Ăнсăртран улшăну шутне харăсах темиçе йывăça касни, унччен ларнă хуралтăна сӳтни т.ыт.те кĕреççĕ. Çĕнĕ хуртсем хăйсен çемйине таврăнаймасан, паллах, пыл илесси те чакать. Çавăнпа утар çывăхĕнче улшăнусене вĕлле хурчĕсене хăнăхмалла – ерипенрех – тума тăрăшмалла.

Çулла вĕллесене урăх вырăна куçармалла пулсан çак ĕçе вĕлле хурчĕсене пĕчĕккĕн хăнăхтарса тумалла. Вĕллесене каçхине, хуртсем пуçтарăнсан тиесе каймалла. Çĕнĕ çĕрте ирчен вырнаçтарса лартмалла. Ирхине вара вĕçсе тухакан вĕллерен хуртсем тӳрех ирĕке инçете ан вирхĕнччĕр. Малтан хăйсем çĕнĕ вырăнта пулнине туйса илччĕр.

Çакна çапларах йĕркелеме пулать. Ирпе-ирех, хуртсем вĕçсе тухнă тĕле чĕрĕ курăк кăпăшкалатса хумалла. Ĕçе вĕçекен хуртсен курăк хушшипе хиркеленсе тухма тивет. Çавна май вĕлле хурчĕ хăйсен йĕри таврашĕнче улшăну пулнине туйса илет. Çавăнпа тӳрех сĕткен пухма вĕçмест, малтан тавралăхпа паллашма пикенет. Тавралăха тĕпченĕ хыççăн хуртсем çула вĕренсе çитеççĕ те тăрăшсах нектар пуçтарма тытăнаççĕ.

Çакнашкал ĕç харама каймĕ. Пĕчĕк ĕçченсем тухăçпа савăнтарĕç.



# Тутлă пулă туянар

Лавккара е пасарта туяннă чухне тимлĕрех пулма сĕнесшĕн. Сутлăхра кăтартнă хак тепĕр чухне таварпа пачах та тĕл килмест. Хăшпĕр чухне сутуçăсем пĕрпекрех пулăсене ылмаштарса сутма та пултараççĕ. Сентрере пĕр пулă вырть, сире çавăн йышши йӳнĕрех пулăна тыттарса яраççĕ.

Час-часах тĕл пулакан ултав – деликатес кета пулăна çав йышши горбушăпа ылмаштарни. Горбушăн хакĕ йӳнĕрех, эсир вара кета туянатăр.

Çакнашкал вăлтана çакланас мар тесен пулăсемпе «сывăхрах паллашмалла». Кета, тĕслĕхрен, пысăк пулă – 5 кг яхăн таяканни сайра мар. Эппин, кета тесе туянакан пулă касăкĕсем те пысăк пулмалла. Кета тĕсĕ яланах çутă кăвар тĕслĕ. Горбушăн вăтам виçи вара 2 кг яхăн çеç, унăн тĕсĕ те тĕксĕмрех хĕрхĕлтĕм.

Трескапа пикша та пĕр пекрех. Треска усăллăрах шутланать тата тутлăрах, эппин хаклăрах. Треска вырăнне те пикша тыттарса яма пултараççĕ чее сутуçăсем. Трескана пикшăран уйăрма пĕлмелле. Треска тирĕ сарăрах лапкăшсемпе витĕннĕ, пикшăн вара пусĕнчен пусласа хӳри патне çитиччен хура пунктир йĕр пырать.

Лососьпа семга, тĕрĕссипе, пĕр пулах тесе çирĕплетеççĕ пĕлекенсем. Семга тесе Каспи тинĕсĕнчен тытнă лосось пулла калаççĕ.

Хекпа тинĕс уланкине ашĕн тĕсĕнчен уйăрма пулать. Тинĕс уланки хаклăрах, çемçерех, пахарах. Унăн ашĕ хекăннипе танлаштарсан шурăрах.

Юлашкинчен тăварланă селедкăна хакласси çинчен. Çуллă та тутлă селедкăн çурăмĕ пусĕнчен хăмпăлчăкланса пырать. Селедка çурăмĕ тӳрĕ пулсан, хăй вăрăм та начартарах тăк вăл тутлă пулмĕ. Тăварлă селедка тени çеç.

Пирĕн сĕнӳсем пулă туяннă чухне кирлĕ пуласса шанатпăр.

## Пĕлни пăсмасть

# Туммире сăмалапа вараласан

Ачапча таçта та çӳрет, тумтирĕ те хăвăрт вараланать. Ывăлăм пĕррехинче футболкипе шăлаварне сăмала лектернĕ. Хальхи йышши япала çумалли порошокра çуса пăхрăм, сăмала кăштах çеç тасалнă. Юлташăм сăмалана кăлармалли пĕр меслет каларĕ. Сире те сĕнесшĕн, пĕлни пăсмасть.

Çур стакан ăшă шывра 1 апат кашăкĕ апат соди ирĕлтермелле. Çак «пăтăпа» тăмхасене сĕрмелле. Сăмала йăлтах пурпĕрех кайса пĕтместха, йĕр юлать. Унтан çак тĕлсене чĕрне лакне тасатмалли шĕвекпе йĕпетмелле. 3-4 минутран вараланчăксем тĕссĕрленеççĕ. Япалана тепре çунă хыççăн пĕр йĕр те юлмасть.

Мария ВЕТРОВА.

## Уяв сĕтелĕ валли

# Чăх ашĕнчен – ананас



**Хуппипе пĕçернĕ 2-3 çĕрулми, чăх тукмакки, 3 çăмарта, 100 грамм сыр, консервланă 3 хăяр, çур сухан /кĕрлĕ тĕсли лайăхрах/, майонез, тутине кура пăрăçпа тăвар кирлĕ.**

**Илемлетме:** 2 ывăç аçтăрхан măйăрĕ /мăйăрсене çурмалла пайламалла/, симĕс сухан.

Çăмартана, чăх ашне пĕçермелле. Çĕрулмипе çăмартана шуратмалла, шултра теркăпа хырмалла. Аша шăмминчен уйăрса вĕтĕ турамалла. Сыра теркăпа хырмалла, хăяра тăваткаласа турамалла. Сухана вĕтетмелле. Хатĕрленĕ çимĕçсене салат савăтне ӳхен, сийĕн-сийĕн хумалла: çĕрулми, сухан, чăх ашĕ /çуррине/, консервланă хăяр, чăх ашĕ /юлнине/, сыр, çăмарта. Сийсене кăштах тăвар, пăрăç сапмалла, кашни сийне майонез сĕрмелле. Салата мăйăрпа, симĕс суханпа илемлетмелле.

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

## ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**28.Вăкăр,** ĕне, **тына, сысна амисем.** Т. 8-927-999-37-37.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**50.Коров.** Т. 89278508564.

**108.Тёлок, коров.** Т. 8-937-014-49-97.

**729.КРС** – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.

## ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**32.Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А., Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** *Лиц. ЛО 21-01-001-096 от 06.06.2014 г. МЗ СР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89063808628.

**38.Чистка колодцев.** Т. 8-961-342-90-59.

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur.21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 8-937-375-63-78, Мила.

**70.ОКНА, ДВЕРИ, ПОТОЛКИ.** Доступные цены. Договор, гарантия. Замер и консультация – бесплатно. Т. 89170788391.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**191.Обшивка сайдингом, утепление, кровля.** Т. 462777.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

## ĔÇ РАБОТА

**54.МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ** – в Подмосковье. Т. 89176737773.

**126.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда, вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**Изготовление в короткие сроки.**
Гарантия качества
Скидки до 30 %
**Тел. 89176594701.**

## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900р., прихожие от 3600р., шкафы от 3300р., комоды от 2300р., столы от 1000р., кровати от 4000р. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 8-987-576-65-62.

**5.БЛОКИ** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

**6.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТЫЕ ТРУБЫ.** Т.: 89278441501, 674642.

**7.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит – дёшево. Д-ка. Т. 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит**. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-903-358-30-21.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич, песок.** Т. 8-961-339-33-63.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-3596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-8556.

**29.Плуги,** опрыскиватели, **косилки,** грабли, **картофелесажалки,** погрузчики, доильные аппараты. **ДОСТАВКА!** Т.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**30.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**34.Гравмассу,** песок, **щебень, керамблоки.** Доставка до 25 тн. Т.: 89176500385, 89603073399.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** -диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**43.БРУСЧАТКУ, плиты** тротуарные, **бордюры, водостоки.** Укладка. Т. 8-967-470-27-36 /Мир камней, Чебоксары, пр. Машиностроителей, 1Д/.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 8-906-381-44-20.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 89053447932.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

**71.ПИЛОМАТЕИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 89033891400.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**86.ОКНА** от 4900 р.; **ДВЕРИ** стальные от 9900 р. **Гарантия** производителя. Замер – бесплатно. Звоните по тел. 89379549245.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. **Доставка.** Документы. Т. 89373866629.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, **половняк, КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95.ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте.
Т. 8-927-844-15-01.

**111.ТЕПЛИЦЫ от производителя из поликарбоната.** Д-ка. Уст-ка. Скидки. Т. 89876667423.

**112.ТЕПЛИЦЫ от производ-ля.** Д-ка. Установка. Т. 89875751707.

**120.ПЕНОПОЛИСТИРОЛ–ПЕНОПЛАСТ,** теплоизоляционный материал. **НИЗКИЕ ЦЕНЫ.** ДОСТАВКА. Прием заказов по тел. 8-917-078-99-45.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**132.УЛЬЯ новые.** Т. 89603091414.

**133.СЕТКУ–РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, сетку сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку, столбы.** Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

**137.Месячных бычков** на откорм по 8000 р. Доставка по ЧР. Т.: 89176641716, 89196690171.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, двери /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.

**141.СРУБЫ** /6х3,4х3/ + комплектация. Тел. 8-937-396-91-01.

**143.ТЕПЛИЦЫ от производителя** – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**148.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА** – немецкое качество. Низкие цены. Замер и доставка – бесплатно. Т.: 89278506139, 89278500856.

**151.КАЧАКА – Шупашкар районĕнче.** Т. 8-987-668-87-12.

**154.ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Пенсионерам скидки. Т. 89176627164.

**170.Профнастил, метоллочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**178.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича, **щебень.** Пенсионерам – скидки. Т. 89176769379.

**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**186.СЕНО в рулонах. Доставка.** Тел. 8-927-998-82-27.

**188.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-927-846-24-10.

**184.КОЗ** белых безрогих **с козлятами.** Т. 89603085855.

**189.СЕМЕНА картофеля** от производителя. Т. 89278454224.

**190.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – 5700 р. Т. 89022872777.

**192.ДОМ** в Моргаушском районе. Т. 8-965-686-45-52.

**194.**В мешках и россыпью **навоз, торф, песок.** Т. 89276682590.

**199.Семенной КАРТОФЕЛЬ ранних сортов** I и II репродукции – от 18 руб./кг. Т. 8-927-856-92-02.

**201.ОВЕЦ и ЯГНЯТ романовской породы.** Д-ка. Т. 89196529296.

**202.СЕНО в рулонах 130 кг** – 700 руб. Т. 8-919-652-92-96.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**787.Кирпич, гравмассу, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89033228078.

«ХЫПАР»

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăлă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ
Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
56-15-30, 56-00-67.
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.
Электронлă почта:
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăлă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

01.04.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

Тираж 15949. Заказ 1202.